ВИЛĔМРЕН АН ХĂРА

Иисус ăна каланă: «Эпĕ — чĕрĕлӳ те, чĕрĕлĕх те, Мана ĕненекен вилсен те чĕрĕлсе тăрĕ». Мана ĕненекен пурăнакан кирек кам та вилмĕ...
Иоанн 11:25-26

Эпир тăватă чăнлăха туллин ăнланса илмелле:
1. Турă сана çав тери юратать.
Вăл сире Хăйпе пĕрле пĕлĕтре ĕмĕрлĕх пурăнăç парасшăн.
Мĕншĕн тесен Турă тĕнчене çав тери юратнăран Хăйĕн
пĕртен-пĕр Ывăлне панă, Ăна ĕненекен кирек кам та
пĕтмелле мар, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пултăр тесе. Иоанн 3:16
Вăл сире Хăйпе пĕрле тулăх та пĕлтерĕшлĕ пурнăç пултăр
тет.
Вăрă вăрлама, вĕлерме, пĕтерме кăна килет. Эпĕ вĕсем
пурăнăçлă пулччăр, пурăнăçлăрах пулччăр тесе килтĕм.
Иоанн 10:10

Апла пулин те, нумайăшĕ пĕлтерĕшлĕ пурнăçпа
пурăнмасть, ĕмĕрлĕх пурнăç пуррипе çуккине шанмасть,
мĕншĕн тесен...
2. Этем çутçанталăкран çылăхлă. Çавăнпа вăл Турăран
уйрăлнă.
Пурте çылăха кĕнĕ.
Мĕншĕн тесен пурте çылăха кĕнĕ, турă мухтавлăхĕнчен
пăрăннă; Рим 3:23
Мĕншĕн тесен укçана юратни — пур усалăн та тымарĕ...
1 Тимофей 6:10
Çылăх тӳлевĕ — вилĕм.
Мĕншĕн тесен çылăх тӳлевĕ — вилĕм... Рим 6:23

Библире икĕ тĕрлĕ вилĕм çинчен каланă:
• Ӳт-пӳ вилĕмĕ
Çынсем пĕрре вилмелле, унтан вара суд пулать:
Еврейсем 9:27
• Чун-чĕре вилĕмĕ е тамăкра Турăран ĕмĕрлĕхех уйрăлни
Анчах та хăравçăсем, ĕненменнисем, ирсĕррисем, çын
вĕлерекенсем, аскăнлăхсем, тухатмăшсем, йĕрĕхсене
пуççапакансем, пур суеçĕсем те вут-çулăмпа кӳкĕртпе
çунакан кӳлĕре пулĕç. Ӳлĕмхине 21:8

Енчен те этем хăйĕн çылăхне пула Турăран уйрăлса тăрать пулсан, çак ыйтăва татса пама мĕнле май пур?
Эпир час-часах çапла шутлатпăр: çак ыйтăва татса памалли майсем: тĕн, ырă ĕçсем тата лайăх йăла-йĕрке.
Анчах Турăран пĕртен-пĕр решени пур.
3. Иисус Христос — пĕлĕт çине пĕртен-пĕр çул.
Ку вăл — Турă пĕлтерни.
«Эпĕ – çул та, чăнлăх та, чĕрĕлĕх те», – тенĕ ăна Иисус.
Ашшĕ патне Ман урлă пулмасан никам та çитеймест.
Иоанн 14:6

Вăл пирĕн çылăхсемшĕн туллин тӳлерĕ.
Мĕншĕн тесен Христос та çылăхсемшĕн пĕрре асапланнă, пире Турă патне илсе çитерес тесе, Христос ӳт-пӳпе вилнĕ, анчах Сывлăшпа чĕрĕлнĕ: 1 Петр 3:18
Унăн Юнĕ урлă пире çăлса хăварнă, çылăхсене каçарнă.
Ефес 1:7
Ăна ĕмĕрлĕх пурăнăç пама сăмах пани пур.
Ывăлне ĕненекен ĕмĕрлĕх пурăнăçлă, Ывăлне ĕненмен çын пурăнăç кураймĕ; анчах Турă çилли ун çинче тăрать.
Иоанн 3:36
Мĕншĕн тесен çылăх тӳлевĕ — вилĕм; анчах та Турă панă парне вăл — Иисус Христос Хуçамăр урлă ĕмĕрлĕх пурăнăç. Рим 6:23

4. Çăлăнас тесен, пирĕн Иисус Христоса ĕненмелле.
Пирĕн çăлăнăç Иисус Христоса ĕненнипе Турă ырăлăхĕпе çыхăннă.
Мĕншĕн тесен эсир ĕненнипе Турă ырăлăхĕпе çăлăннă; анчах ку сирĕнтен мар, вăл Турă панă парне, ĕçрен мар, никам та мухтанмĕ. Ефес 2:8—9
Çӳлхуçа ятне чĕнекен кирек кам та çăлăнĕ». Рим 10:13

Çылăхлă çыннăн кĕлли
Çакна ĕненсе кĕлтăвăр:
Иисус Турă, мана юратнăшăн пысăк тав сана. Эпĕ хам çылăхлă пулнине йышăнатăп, сирĕнтен каçару ыйтатăп. Тавтапуç сана хĕрес çинче вилнĕшĕн, пытарнăшăн тата манăн пур çылăхăмсемшĕн тӳрĕлсе тăнăшăн. Эпĕ сана хамăн Çӳлхуçам тата Çăлаканăм вырăнне хурса шанатăп. Эпĕ санăн ĕмĕрлĕх пурнăç парнине йышăнатăп та хамăн пурнăçа сана паратăп. Хăвăн пур ӳкĕтне те тытса тăма, Хăв умăнта юрăхлă пулма пулăшсам мана. Аминь.

Эсир Иисус Христоса шаннă пулсан, сирĕнпе çакăн пек пулса тухнă:

- Халĕ ĕнтĕ эсир Турăпа пĕрле ĕмĕрлĕх пурăнăç илетĕр.

Мана Яраканăн ирĕкĕ акă мĕнре: Ывăлне куракан, Ăна ĕненекен кирек кам та ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пултăр, Эпĕ ăна юлашки кун чĕртсе тăратăп». Иоанн 6:40

- Сирĕн пур çылăхăр та тӳленĕ, каçарнă.

(иртнĕ, хальхи, пуласси)
Иисус вара çылăхсемшĕн пĕр парне кӳнĕ хыççăн ĕмĕрлĕхех Туррăн сылтăм енне ларнă; Еврейсем 10:12

- Эсир Турă умĕнче çĕнĕ çын. Ку санăн çĕнĕ пурнăçăн пуçламăшĕ.

Çавăнпа та кам та пулин Христоспа пĕрле пулсан, вăл çĕнĕрен пултарнă çын; акă пурте çĕнĕ пулса тăчĕ. 2 Коринф 5:17

- Эсĕ Турă ачи пулса тăтăн.

Анчах та Хăйне йышăннă çынсене, Хăйĕн ятне ĕненекенсене, Турă ывăлĕсем пулма ирĕк панă: Иоанн 1:12

Ырă ĕçсем пирĕншĕн çăлăнмалли май мар, вĕсем пирĕн çăлăнăçăн çирĕплетĕвĕ е çимĕçĕ.
Мĕншĕн тесен эпир – Унăн ĕçĕсем, пире Христос Иисуспа пĕрлештерсе ырă ĕçсем тума пултарнă, çав ĕçсене пурнăçласа пурăнма Турă малтанах хатĕрлесе хунă. Ефес 2:10
Тур сыхлатăр!